28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
МАРТ
30
ЭРНЕКУН
60(6811) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсен командующине Совет Союзĕн Маршалне ТОЛБУХИНА
Фронт штабĕн начальникне Генерал-лейтенанта ИВАНОВА

УКРАИНАРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, çав тери хăвăрт наступлени туса пырса, паян, мартăн 29-мĕшĕнче, СОМБАТЕЛЬ тата КАПУВАР хулисемпе çулсен паха узелĕсене туртса илнĕ те, КЕСЕГ хулине йышăнса, Австри чиккине тухнă.

СОМБАТЕЛЬ, КАПУВАР тата КЕСЕГ хулисене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: ГЛАГОЛЕВ генерал-полковникăн, ЗАХВАТАЕВ генерал-лейтенантăн, РОЖДЕСТВЕНСКИЙ генерал.майорăн, ДЕРЕВЯНКО генерал-майорăн, ТИХОНОВ генерал-лейтенантăн, МИРОНОВ генерал.лейтенантăн, БОБРУК генерал-майорăн, БОГДАНОВ генерал-майорăн, БЛАЖЕВИЧ генерал.майорăн, ЛАРИН полковникăн, СТЕПАНОВ полковникăн, ПАРФЕНОВ полковникăн, БРАНСБУРГ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн НЕДЕЛИНАН, артиллери генерал-майорĕн БРЕЖНЕВАН, артиллери генерал-майорĕн ГУСЕВАН, артиллери генерал-майорĕн ЦИКАЛАН, артиллери генерал.майорĕн ВЕЛИКОЛЕПОВАН, артиллери генерал-майорĕн РАТОВАН, БУЛАХТИН полковникăн, ВОЛЧАНЕЦКИЙ полковникăн, ГИЛЬМАН полковникăн, ЧАПЛИН полковникăн, БАЖЕНОВ полковникăн, СТЕПАНОВ полковникăн, ЖЕВУЦКИЙ подполковникăн, ШАБАЛИН майорăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-полковникĕн КРАВЧЕНКАН, танковăй çарсен генерал.майорĕн ПАВЕЛКИНАН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ВОЛКОВАН, РУССИЯНОВ генерал.лейтенантăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн ШТРОМБЕРГАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн САВЕЛЬЕВАН, БУДНИКОВ полковникăн, ОСТАПЕНКО полковникăн, БЕЛОГЛАЗОВ полковникăн, ЖИЛИН полковникăн, МИХНО полковникăн, СЕЛЕЗНЕВ полковникăн, ОБДАЛЕНКОВ полковникăн, ШАЛЫГИН подполковникăн, САРОЧИНСКИЙ подполковникăн, ОВЧАРОВ подполковникăн, ВОРОНОВ полковникăн, САВЕЛЬЕВ подполковникăн, ПЛОТНИКОВ майорăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн СУДЕЦАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ТОЛСТИКОВАН, ИВАНОВ полковникăн, ТЕРЕХОВ полковникăн, СМИРНОВ полковникăн, НЕДОСЕКИН полковникăн, ШАТИЛИН подполковникăн, КОЖЕВНИКОВ подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-полковникăн КОТЛЯРАН, ВОДОВАТОВ полковникăн, ФАДЕЕВ полковникăн саперĕсем; сыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЕВАН, МЯЧИН полковникăн, ШЕРВУД подполковникăн; СУХИХ подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, СОМБАТЕЛЬ, КАПУВАР тата КЕСЕГ хулисене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 29-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăвată тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Украинăри 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, малта асăннă хуласене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, малта асăннă хуласене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи мартăн 29-мĕшĕ. № 316.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Чехословаки Республикин Президенчĕ Эд. Бенеш господин ячĕпе тунă апатлану

Мартăн 28.мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Чехословаки Республикин Президенчĕ Эдуард Бенеш доктор ячĕпе Кремльте апатлану туса иртнерĕ.

Апатланура çаксем пулнă: Эд. Бенеш господин, Чехословаки Республикин Премьер-Министрĕ Я. Шрамек господин, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Я. Масарик господин, Словакин Наци Совечĕн Председателĕ В. Шробар господин, Чехословакин СССР-ти Посолĕ З. Д. Фирлингер господин, Я. Стравский, Я. Бечко, Я. Лихнер господинсем, Чехословакин 1-мĕш корпусĕн командующийĕ Л. Свобода генерал, Чехословакин СССР-ти Çар Миссийĕн Начальникĕ Г. Пика генерал, çавăн пекех тата Эд. Бенеш господинпа пĕрле килнĕ çынсем тата Чехословакин СССР-ти Посольствин членĕсем.

Совет Союзĕ енчен çаксем пулнă: М. И. Калинин, В. М. Молотов, А. И. Микоян, Г. М. Маленков, Л. М. Каганович, Н. М. Шверник, Н. А. Вознесенский, А. Н. Косыгин, СССР-ĕн Чехословакири Посолĕ В. А. Зорин, А. И. Шахурин, В. А. Малышев, Б. Л. Ванников, Д. Ф. Устинов, А. Я. Вышинский, В. Г. Деканозов, РСФСР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ А. И. Лаврентьев, УССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Д. З. Мануильский, А. Ф. Горкин, арми генералĕ А. И. Антонов, артиллерин Главнăй Маршалĕ Н. Н. Воронов, авиаци Маршалĕ Ф. Я. Фалалеев, арми генералĕ А. В. Хрулев тата ыттисем те.

Апатлану ăшă кăмăллă, туслă обстановкăра иртнĕ.

Совет Союзĕн Маршалне Л. А. Говорова Ленин орденĕпе „Ылттăн Çăлтăр" медалĕ тата К. Н. Чарквиание Отечественнăй вăрçă орденĕ пани

Мартăн 27-мĕшĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ Совет Союзĕн Маршалне Л. А. Говорова Совет Союзĕн Геройĕ ятне парасси çинчен калакан грамотăпа пĕрле Ленин орденĕ тата «Ылттăн Çăлтăр» медаль панă. Вăл наградăна Ленинград фрончĕн çарĕсен нимĕç захватчикĕсене хирĕç тăвакан операцийĕсене ертсе пырас тĕлĕшпе Верховный Главнокомандовани панă боевой заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн тата çав операцисенче ăнăçусем тунăшăн панă. Хĕрлĕ Çарта нумай вăхăт хушши тата лайăх ĕçлесе пурăннăшăн ăнах тата Ленин орденĕ панă.

Государствăна тырă тăратас ĕçе ăнăçлăн пурнăçланăшăн Грузири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕн пĕрремĕш секретарьне К. Н. Чарквиание 1-мĕш степень Отечественнăй вăрçă орденĕ панă. (ТАСС)

Пĕрлешӳллĕ нацисен Сан-Франциско хулинче пулса иртмелли конференцийĕ умĕн

Крымри конференци йышăннă тăрăх, апрелĕн 25-мĕшĕнче Сан-Франциско хулинче мирпе хăрушсăрлăха упрама тăвакан пĕтĕм тĕнчери организацин уставне хатĕрлемешкĕн Пĕрлешӳллĕ нацисен конференцийĕ уçăлмалла.

Çав конференцие кайма ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ делегаци уйăрса хунă. Делегаци çаксем кĕреççĕ: А. А. Громыко, США-ри совет посолĕ, делегаци председателĕ, А. А. Соболев посланник, К. В. Новиков посланник, С. К. Царапкин посланник, А. Ф. Васильев генерал-лейтенант, К. К. Родионов контр-адмирал, С. А. Голунский профессор, С. Б. Крылов профессор. (ТАСС).

ТАСС хирĕçлесе калани

Америкăра тухакан «Дейли Миррор» хаçатăн обозревателĕ Пирсон каланă тăрăх, Совет Союзĕпе Франци пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă договорта вăрттăн статья пур пулать. Вăл статьяра французсем хĕвеланăçĕнче, Совет Союзĕ хĕвелтухăçĕнче хăйсем тăвас тенине тума пултарни çинчен каланă пулать.

ТАСС çапла калама полномочи илнĕ: Совет Союзĕпе Франци пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă договорта нимĕнле вăрттăн статья та çук, çавăн çинчен Пирсон пĕлтерни тĕрĕс мар.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 3-мĕш фронт çарĕсен командующине Совет Союзĕн Маршалне ВАСИЛЕВСКИЕ
Фронт штабĕн начальникне Генерал-полковника ПОКРОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 3.мĕш фронт çарĕсем, паян, мартăн 29.мĕшĕнче, нимĕç çарĕсен Хĕвелтухăç Пруссире, КЕНИГСБЕРГРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, çавăрса илнĕ группине пĕтерсе тăкас ĕçе вĕçленĕ.

Мартăн 13.мĕшĕпе 29-мĕшĕ хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен тыткăна лексе 50.000 çын ытла, вилсе 80.000 çын пĕтнĕ, çакăнпа пĕрлех фронт çарĕсем нимĕçсене 605 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен тупă тата 3.500 ытла хир тупи тытса илнĕ.

КЕНИГСБЕРГРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕç çарĕсен группине çапса аркатассишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: ЛУЧИНСКИЙ генерал-лейтенантăн, ГОРБАТОВ генерал-полковникăн, ШАФРАНОВ генерал-лейтенантăн, ГАЛИЦКИЙ генерал.полковникăн, КРЫЛОВ генерал-полковникăн, ЧАНЧИБАДЗЕ генерал.лейтенантăн, ГУСЕВ генерал-лейтенантăн, ИВАШЕЧКИН генерал-лейтенантăн, СЕМЕНОВ генерал-лейтенантăн, ГЛЕБОВ генерал-лейтенантăн, РОГАЧЕВСКИЙ генерал-майорăн, ЩЕДРИН генерал.майорăн, ПРИХИДЬКО генерал-майорăн, ЛЕВИН генерал-майорăн, ИВАНОВ генерал-лейтенантăн, КУЗНЕЦОВ генерал-лейтенантăн, УРБАНОВИЧ генерал.лейтенантăн, КОШЕВОЙ генерал-лейтенантăн, ФОКАНОВ генерал-лейтенантăн, КОЛЧАНОВ генерал-лейтенантăн, АЛЕКСАНДРОВ генерал-майорăн, ШВАРЕВ генерал-майорăн, БАТИЦКИЙ генерал.майорăн, НИКИТИН генерал-майорăн, КНЯЗЬКОВ генерал-майорăн, КЛЕШНИН генерал.майорăн, ИВАНОВ генерал-майорăн, ПЕРЕКРЕСТОВ генерал-майорăн, КАЗАРЦЕВ генерал-майорăн, ПРОВАЛОВ генерал.майорăн, АРУШАНЯН генерал-майорăн, ЛЮХТИКОВ генерал-майорăн, ГАРЦЕВ генерал-майорăн, ВЛАДЫЧАНСКИЙ генерал-майорăн, ДАНИЛОВ генерал.майорăн, КУЗНЕЦОВ генерал-майорăн, МЫШКИН генерал-майорăн, КОРЧИКОВ генерал-майорăн, ТУРЧИНСКИЙ генерал-майорăн, ШАЦКОВ полковникăн, ПОПОВ полковникăн, РЫБАЛКО полковникăн, ХВОСТОВ генерал-майорăн, МАЛЮКОВ генерал.майорăн, ЦВЕТКОВ полковникăн, МИХАЛИЦИН генерал-майорăн, ТЕЛКОВ полковникăн, РОМАНЕНКО полковникăн, ВЕРЕВКИН генерал.майорăн, АБИЛОВ полковникăн, КРИВЕНЦОВ полковникăн, КОНОВАЛОВ генерал-майорăн, ВЯЗНИКОВСКИЙ полковникăн, ГРЕКОВ полковникăн, ЛЕВИН полковникăн, БЕРЕСТОВ генерал-майорăн, БУЛАНОВ полковникăн, ДЕМИН полковникăн, ХАУСТОВИЧ полковникăн, САМОХВАЛОВ генерал.майорăн. ПРОНИН генерал-майорăн, КАРИЖСКИЙ генерал-майорăн, МАСЛОВ генерал.майорăн, ТОЛСТИКОВ полковникăн, КАЗАРЯН генерал-майорăн, ЦУКАРЕВ полковникăн, КУСАКИН полковникăн, ГОРОДОВИКОВ генерал-майорăн, ЛОГИНОВ полковникăн, ДОНЕЦ генерал-майорăн, ЗОРИН полковникăн, МАКСУТОВ генерал-майорăн, САТИХИН полковникăн, ЗОЛОТАРЕВ полковникăн, МАКСИМОВИЧ генерал-майорăн, ПОЛИЩУК полковникăн, ЗАКУРЕНКОВ генерал.майорăн, ВОЛКОВ полковникăн, МОСКАЛЕНКО генерал-майорăн, БИРСТЕЙН полковникăн, ПАШКОВ полковникăн, ГРИГОРЯН полковникăн, ПОГРЕБНЯК полковникăн, СЕРЕБРОВ полковникăн, ЦЫПЛЕНКОВ полковникăн, КАЗАКЕВИЧ генерал.майорăн, ГРЕБНЕВ полковникăн, БУЛАТОВ генерал-майорăн, ОПЯКИН генерал-майорăн, СОБОЛЕВ полковникăн, ЛЮБЫЙ генерал-лейтенантăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн БАРСУКОВАН, артиллери генерал-майорĕн ПЕТРОПАВЛОВСКИН, артиллери генерал.майорĕн ВЛАДИМИРОВАН, артиллери генерал-майорĕн СЕМИНАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн СЕМЕНОВАН, артиллери генерал-майорĕн ФЕДОРОВАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн СТРЕЛЬБИЦКИН, артиллери генерал-лейтенанчĕн ТИМОТИЕВИЧАН, артиллери генерал-майорĕн САЛИЧКАН, артиллери генерал.майорĕн ПОПОВАН, КУЗНЕЦОВ полковникăн, СТРУЕВ полковникăн, артиллери генерал.майорĕн КОРОЧКИНАН, артиллери генерал-майорĕн КАРСАНОВАН, СЕДОВ полковникăн, МАРГУЛИС полковникăн, ЗАСЕКИН полковникăн, КИЛЕЕВ полковникăн, МЕРКУРЬЕВ полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-полковникĕн РОДИНАН, БАБЕНКО полковникăн, ОПАРИН полковникăн, ЛУКАШОВ полковникăн, ПРОКОПЕЦ полковникăн, СЕМЕНЮК полковникăн, ГОЛОВЧАНСКИЙ полковникăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн НОСОВАН, ИВАНЦЕВ полковникăн, БЕЛИК полковникăн, СУРМИН подполковникăн, КОЗИКОВ полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ХРЮКИНАН, авиаци генерал-полковникĕн ПАПИВИНАН, авиаци генерал.лейтенанчĕн ДАГАЕВАН, авиаци генерал-майорĕн БЕЛОВАН, авиаци генерал.лейтенанчĕн ТУПИКОВАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн НЕСТЕРЦЕВАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ЛОГИНОВАН, СКОК полковникăн, авиаци генерал-майорĕн ИВАНОВАН, ПРУИКОВ полковникăн, ХАТМИНСКИЙ полковникăн, авиаци генерал.майорĕн ШЕВЧЕНКАН, ЧУЧЕВ полковникăн авиаци генерал.майорĕн НЕЧИПОРЕНКАН, авиаци генерал.майорĕн ЗАХАРОВАН, ЗИМИН полковникăн, ШИНКАРЕКНО полковникăн, АНДРЕЕВ полковникăн, ЗАКЛЕП подполковникăн, САЖНЕВ подполковникăн, авиаци генерал.майорĕн МОЛОКОВАН, ЛЕБЕДЕВ полковникăн, авиаци генерал-майорĕн АЛЕКСАНДРОВАН, КУЧМА полковникăн, авиаци генерал.майорĕн АНДРЕЕВАН, КУРБАТОВ полковникăн, ДЕЛЬФИНО майорăн, ПЛАХОВ полковникăн, РОДИН подполковникăн, БЕЛЫЙ полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтнанчĕн БАРАНОВАН, ШИЛО полковникăн, ЖЕЛЕЗНЫХ полковникăн, ЛУКАШЕНКО полковникăн саперĕсем; сыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн БУРОВАН, сыхăну çарĕсен генерал-майорĕн МИШИНАН, ПЛОТКИН полковникăн, БЕЛЫШЕВ полковникăн, ДАВЫДЕНКО полковникăн, ПРИХОДАЙ полковникăн, сыхăну çарĕсен генерал.майорĕн КОКОРИНАН, сыхăну çарĕсен генерал.майорĕн МАМОТКАН, ЦИЛБОВ подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, КЕНИГСБЕРГРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕç çарĕсен группине çапса аркатассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 29-мĕшĕнче 23 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăвată тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, КЕНИГСБЕРГАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕç çарĕсен Хĕвелтухăç Пруссири группировкине çапса аркатнăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, КЕНИГСБЕРГРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕç çарĕсен Хĕвелтухăç Пруссири группине çапса аркатассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи мартăн 29-мĕшĕ. № 317.

ВЦСПС-ăн XIII-мĕш пленумĕ

Мартăн 27-мĕшĕнче ВЦСПС-ăн XIII-мĕш пленумĕнче рабочисемпе служащисен нушисене тивĕçтерес тĕлĕшпе профсоюз организацийĕсен ĕçне лайăхлатасси çинчен сӳтсе-явнă.

Докладчикăн — ВЦСПС секретарĕн Сидоренко юлташăн юлашки сăмахĕ хыççăн доклад тăрăх сĕнӳсем хатĕрлеме пленум комисси суйласа хунă.

Каçхи ларăвăн вĕçĕнче «рабочисемпе служащисем хушшинче профсоюзсен культурăллă-массăллă ĕçне лайăхлатасси çинчен» ВЦСПС секретарĕ Л. М. Соловьев доклад туса панă. (ТАСС).

СССР Совнаркомĕнче

Совет Союз Маршалĕн Борис Михайлович Шапошниковăн çемьине пулăшасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. Б. М. Шапошников юлташăн арăмне —М. А. Шапошниковăна пĕр вăхăтлăха 200.000 тенкĕ укça парас.

2. Б. М. Шапошников юлташăн арăмне —М. А. Шапошниковăна хăйĕн çемьине тăрантарса пурăнма Б. М. Шапошников Маршалăн уйăхри ĕçукçи чухлĕ, уйăхла каласан уйăхне 5.000 тенкĕ пенси парса тăмалла тăвас.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 27-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 27-мĕшĕнче КЕНИГСБЕРГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем КАЛЬХОЛЬЦЕР-ХАКЕН сăмсахĕ районĕнче тăшманăн аркатса тăкнă чăçĕсен юлашкийĕсене пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. ВОЛИТТНИКК, ШНАКЕНБЕРГ, ФОЛЛЕНДОРФ, ЛИНДЕНБЕРГ ялĕсене тытса илнĕ. Мартăн 26-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем ку районра çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: самолетсем—8, танксем—113. бронетранспортерсем — 66, тупăсем—594, минометсем—350, пулеметсем—1.100, радиостанцисем—30, тракторсемпе тягачсем — 200, автомашинăсем—13.000, паровозсем—11, чугун çул вагонĕсем—1.863, тĕрлĕ çар пурлăхĕн склачĕсем — 78. Мартăн 27-мĕшĕнче ку районра 4.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

ГДАНЬСК (ДАНЦИГ) хули енче БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă. ГДАНЬСК (ДАНЦИГ) хулипе пĕрлешсе ларнă ОРА, ШТАБТГЕБИТ, АЛЬЧОДТ-ШТАДТ, ТЕМПЕЛЬБУРГ, ЭМАУС, ЦИГАНКЕНБЕРГ, ХАЙЛИГЕН, ЛАНГФУР, ХОХШТРИСС, ЛЕГШТРИСС, РАЙХЕОЛОНИ, ШЕЛМЮЛЬ, ЛАУЕНТАЛЬ, БРЕСЕН ялĕсене туртса илнĕ те ГДАНЬСК хули варринелле тапса кĕнĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем ГДЫНЯ хули çинелле тапăнса пынă, ЛАУЗЕКАЛЕ, ХОХРЕДЛАУ, ДЕМПТАУ, ПУСТКОВИЦ, ЦИССАУ, ЗАГОРШ, ЯНОВО, РАМЕЛЬ, АЙХЕНБЕРГ ялĕсене туртса илнĕ, унтан ГДЫНЯ хулине вăркăнса кĕрсе кайнă та тăшманпа хула урамĕсенче çапăçма тытăннă. Мартăн 26-мĕшĕпе 27-мĕшĕнче фронт çарĕсем 7.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, мартăн 27-мĕшĕнче Силези территорийĕнче ШТРЕЛЕН хулине РЫБНИК хулине—çулсен пысăк узелĕсене тата нимĕçсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене—туртса илнĕ.

МОРАВСКА-ОСТРАВА хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре УКРАИНАРИ 4-мĕш фронт çарĕсем малалла тапăнса пынă, ЗОРАУ, ЛОСЛАУ хулисене туртса илнĕ тата халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ЯНКОВИЦ, ВИЛЬХВА, МШАНА, ЯСТШЕМБЕ ятлă пысăк ялсем.

ЕСТЕРГОМ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре УКРАИНАРИ 2-мĕш фронт çарĕсем НЬЕР ГЕШУЙФАЛУ, ЛАБАТЛАН, ПИСКЕ, ШЮППЕ ялĕсене туртса илнĕ, тăшманăн аркатса тăкнă чăçĕсене ДУНАЙ шывĕн çурçĕр хĕррине хăваласа янă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем ДУНАЙ шывĕн кăнтăр хĕрринче, наступление вăйлатса пырса, АЧ хулине туртса илнĕ тата халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—НАДЬ ГМАНД, БАНО, БЕНИ-РАТАЛАП, МИЗЕ-ЕРШ ятлă пысăк ялсем тата ДУНАЙ шывĕпе БАЛАТОН кӳлли хушшинчи НАДЬ ГМАНД, АСАР чугун çул станцийĕсем.

УКРАИНАРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, ШБРАНТЕТ, ЦЕЛЛДЕМЕЛЕ, ЯНОШАЗА, ТОПОЛЬФА хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — БАРШОНЬОШ, ШОКОРОПАТКА, МОРИЩХИДА, ДЬЯРМАС, ЭДЬХАЗАШКИНО, КЕМЕНОГМАГАШ, МЕРШЕВАТ, ДУКА, НЬИРАД, МОНОШТОР-АПАТ, КЕВЕШКАЛ, КЕВАГОРЕШ ятлă пысăк ялсем тата БАКОНЬСАМБАТЕЙ, ДЬЕМЕРЕ, ВИНАР, ВОБО, ТЮШКЕВАР, БАДАЧОНЬТОМАЙ чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă тата разведчиксем шыраса çӳренĕ. Мартăн 26-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 179 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 37 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ГДАНЬСК (ДАНЦИГ) ХУЛИНЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПАННИ

Мартăн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн йывăр бомбардировщиксем Гданьск (Данциг) хулине йышлăн вĕçсе пырса тапăннă, тăшманăн çар объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула, пушарсем нумай тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Мартăн 27-мĕшĕнче кăнтăрла пирĕн бомбардировщиксем çав хулана тата тăшманăн Гданьск (Данциг) портĕнче тăракан суднисене çаплах пыра-пыра çапнă.

☆ ☆ ☆

ХĔРЛĔ ЯЛАВЛА БАЛТИКА ФЛОЧĔН АВИАЦИЙĔ ТĂШМАН КАРАПĔСЕМПЕ ТРАНСПОРЧĔСЕНЕ ПЫРА-ПЫРА ÇАПНИ

Мартăн 24-мĕшĕпе 25-мĕшĕнче Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ тăшманăн çарсемпе техника тиенĕ вăрçă карапĕсене пыра-пыра çапнă. Çапла пыра-пыра çапса, Балтика тинĕсĕнче Гданьск хулинчен çурçĕртерехре тата Пиллау портĕнче нимĕçсен пĕр подводнăй лодкине, хуралта çӳрекен 3 карапне, ишсе çӳрекен докпа уй ăшĕнчи суднăна тата тăшманăн пĕтĕмĕшпе 67.000 тонна тăякан 11 транспортне шыва путарнă.

МАРТĂН 28-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 28-мĕшĕнче КЕНИГСБЕРГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем Кальхольцер-Хакен сăмсахĕ районĕнче аркатса тăкнă тăшман чăçĕсен юлашкийĕсене пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Мартăн 27-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем ку районра çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: тупăсем—222, минометсем—223, пулеметсем — 430, бронетранспортерсем—22, радиостанцисем—35, автомашинăсем — 1.500.

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем мартăн 28-мĕшĕнче ГДЫНЯ хулине—Балтика тинĕсĕ хĕрринчи паха тинĕс-çар базине, пысăк порта—штурмласа туртса илнĕ.

ГДЫНЯ хулишĕн çапăçнă чухне фронт çарĕсем 9.000 нимĕç салтакĕпе офицерне çити тыткăна илнĕ, çавăн пекех, хĕçпăшалпа тĕрлĕ çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем хытă çапăçнă хыççăн ГДАНЬСК (ДАНЦИГ) хулин хĕвеланăç пайне йышăннă, хулан ХОЛМ утравĕ çинче вырнаçса ларнă районне тăшмантан тасатса пынă.

УКРАИНАРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, ДУНАЙ шывĕн кăнтăр хĕррипе малалла наступлени туса пырса, мартăн 28.мĕшĕнче ДЬЕР хулипе КОМАРОМ хулине—нимĕçсен ВЕНА хули енчи оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕсене—туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ГЕНЬЮ, ДЬЕРСЕНТИВАН, КИШМЕДЬЕР, МЕНФЕ, НИУЛФАУ ятлă пысăк ялсем.

УКРАИНАРИ 3.мĕш фронт çарĕсем, наступление малалла вăйлатса пырса, РАБА шывĕ урлă каçнă та мартăн 28-мĕшĕнче ЧОРНО хулипе ШАРВАР хулине—чугун çулсен паха узелĕсене тата нимĕçсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене, Австри чиккисем патне пымалли çулсене хӳтĕлекенскерсене — туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—РАБА-СЕНТМИХАЛЬ, РАБА ПОРДАНИ, РАБА ШЕБЕШ, ПАПОЦ, ОСТФИАШСОНИФА, ГЕРЧЕКАЛД, БЕГЕТЕ, ЧАБРЕНДЕК, ШУМЕГ, ЗАЛАСЕНТГРОТ, БАЖИ, АЛШО, НЕМЕШ-ВИТА, СИГЛИГЕТ ятлă пысăк ялсем тата ГЕРЧЕ, КАЛД, УКК, ГОГАНФА, ШУМЕГ чугун çул станцийĕсем. Мартăн 27-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем тăшманăн 1.500 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пункта тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Мартăн 27-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 190 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 96 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ПИЛЛАУ, ХЕЛЬ, СОМБАТЕЛЬ ТАТА МОРАВСКА ОСТРАВА ХУЛИСЕНЕ ПЫРСА ТАПАННИ

Мартăн 28.мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн йывăр бомбардировщиксем тăшманăн Пиллау тата Хель порчĕсенчи вăрçă объекчĕсемпе суднисене, Венгрири Сомбатель тата Чехословакири Моравска Острава чугун çул узелĕсене пырса çапнă.

Бомбăсем пăрахнине пула, Пиллау тата Хель порчĕсенче вăйлă пушарсем тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă. Тăшманăн икĕ транспортне бомбăсем тӳрех лекнĕ.

Сомбатель тата Морвска Острава чугун çул узелĕсенче бомбăсем пăрахнине пула нумай тĕлте пушарсем тухнă, нимĕçсен çар эшелонĕсем çуннă.

☆ ☆ ☆

ХĔРЛĔ ЯЛАВЛА БАЛТИКА ФЛОЧĔН АВИАЦИЙĔ ПЫРА-ПЫРА ТАПАННИ

Мартăн 26-мĕшĕнче Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ нимĕçсен Балтика тинĕсĕнчи транспорчĕсене бомбăсем пăрахса штурмланă. Çапла пыра-пыра çапса, Балтика тинĕсĕн кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнче ГДАНЬСК хулинчен çурçĕртерехре тăшманăн 5 транпорчĕпе пĕр танкерне, пĕтĕмĕшпе 31.000 тонна таякансскерсене, хуралти 2 карапне тата пĕр тральщикне шыва путарнă.

1945 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва организацилер!

Краснодар крайĕнчи Брюховец районĕнчи Хĕрлĕ партизансен ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсемпе колхозницисем Совет Союзĕнчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, трактористсемпе трактористкăсене, агрономсене, механиксемпе инженерсене, пĕтĕм ялхуçалăх работникĕсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Çак çырăва эпир нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă Кубанская станицинчен аслă Хĕрлĕ Çарăн—ирĕклĕх çарĕн чапĕ Мускаври çĕнтерÿллĕ салютсен сассипе пĕтĕм совет çĕршывĕнче кĕрлесе тăнă кунсенче çыратпăр. Пирĕн ывăлсемпе аттесем, пирĕн тăвансем фашистла тискер кайăка тăшман çĕрĕ çинче, Берлин çывăхĕнче аркатса пыраççĕ. Татăклă çĕнтерÿ кунĕ халĕ ĕнтĕ çывăхра.

Колхоз хресченĕсен Отечественнăй вăрçă çулĕсенчи хастар та хĕрÿллĕ ĕçне Сталин юлташ пысăка хурса хакларĕ. Çĕршыври мĕнпур колхозниксемпе тата колхозницăсемпе пĕрлех, эпир те çав пысăк хисепшĕн мухтанса савăнатпăр. Хĕрлĕ Çара татах те вăйлăнрах пулăшса тăма пулатпăр.

Хамăрăн тăван края нимĕç вăрă-хурахĕсенчен ирĕке кăларнă хыççăн, эпир хамăр колхозра таварлă сĕт-çу фермине, сурăхпа сысна тата лаша фермисене, колхоз утарне, нимĕçсем аркатса хăварнăскерсене, юсаса ура çине тăратрăмăр. 1944 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 136 процент, сыснасем енĕпе—103 процент, сурăхсем енĕпе—107 процент, лашасем енĕпе—103 процент чухлĕ тултартăмăр.

Иртнĕ çулта эпир вăйлă тырпул туса ăна ăнăçлăн пухса кĕртрĕмĕр. 523 гектар çинчен кĕрхи тулă кашни гектар пуçне 15,7-шер центнер, 672 гектар çинчен çурхи урпа кашни гектар пуçне 13-шер центнер, 328 гектар çинчен кукуруза кашни гектар пуçне 25-шер центнер, 295 гектар çинчен хĕвелçаврăнăш кашни гектар пуçне 12-шер центнер пухса илтĕмĕр. Клещевина, вир, çĕрулмипе пахча-çимĕç тухăçлăхне ÿстермелли плана та иртттерсе тултартăмăр.

Пирĕн колхоз государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене иртттерсе тултарчĕ. 1944 çулта эпир государствăна план тăрăх 57.388 пăт тĕштырă патăмăр тата çав планран иртттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 41.960 пăт тĕштырă патăмăр; хĕвелçаврăнăшĕ план тăрăх 9.211 пăт тата планран иртттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 871 пăт патăмăр; сĕт 23.3 пин литр—планран 3.000 литр ытларах патăмăр; аш-какай 30 центнер вырăнне 50 центнер; çăм 239 килограмм вырăнне 244 килограмм патăмăр. Колхозниксем кашни ĕçкунĕ пуçне 2.5-шер килограмм тĕштырă тата 3 тенкĕ те 50-шар пус укçа илчĕç.

Çуракине тухас умĕн пухăва пухăнса, эпир СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн ялхуçалăхне аталантармалли 1945 çулхи план çинчен йышăннă постановленине сÿтсе-яврăмăр. Çав постановлени пире колхоз хуçалăхне малалла ÿстерсе çирĕплетмелли çулйĕре кăтартса парать. Тĕштырăпа ытти ялхуçалăх продукчĕсен тухăçлăхне тата пухса илекен тырпулсен пĕтĕм хисепне ÿстересси,—çакă пулса тăрать ĕнтĕ партипе правительство пирĕн умма лартнă тĕп задача.

Хаклă юлташсем, эпир Сире çапла чĕнсе калатпăр:

1945 çулта çуракине пысăк пахалăхлăн туса иртттерессишĕн, вăйлă тырпул туса илессишĕн мĕнпур колхозсен, МТС-сен, уйхир бригадисен, трактор бригадисен, звеносен, мĕнпур колхозниксен, трактористсен, агрономсен, МТС-сенчи механиксемпе инженерсен социализмлă ăмăртăвне организацилер!

Эпир хамăр енчен çаксене пурнăçа кĕртме сăмах паратпăр:

Колхозăн акакан çĕр лаптăкне 1944 çулхинчен 199 гектар ытларах сарса, вăрçăченхи виçене çитермелле.

1945 çулта тĕштырă культурисем акнă мĕнпур çĕр лаптăкĕ çинчен кашни гектар пуçне 120-шер пăт тĕштырă туса илмелле. Ытти мĕнпур культурăсен тухăçлăхне ÿстермелли плана та иртттерсе тултармалла.

Çав задачăна пурнăçа кĕртес тесе, эпир çапла тума шутларăмăр:

1. Пĕтĕм çĕр лаптăкне пĕрремĕш класра тăракан кондициллĕ те сортлă вăрлăхсемпе кăна акса хăвармалла. Пирĕн колхозăн пур вăрлăхсем те çителĕклĕ, вĕсене вăрлăхсем тĕрĕслекен лабораторире тĕрĕсленĕ те паха тесе йышăннă.

2. Çурхи уйхир ĕçĕсене малта пыракан агротехника хушнă пек туса иртттермелле: кашни культурăна ун умĕн çав культурăшăн лайăх культура пулнă вырăна, пусуçаврăнăшне çирĕп пăхăнса акса хăвармалла; тăпрари нÿрлĕхе пур майсемпе те сыхласа хăвармалла; тăпран çиелти сийĕ кушăрхасанах кĕрхи çĕртме туса хăварнă пĕтĕм пусса сÿрелесе тухмалла та, вара акас умĕн культиваци тумалла; çĕре çуркунне сухаласине чи ирхи срокесенче туса иртттермелле.

Пучахлă культурăсене 8 кун хушшинче, пропашной культурăсене 6 кун хушшинче, кашни культурăшăн чи лайăх срокесенче акса хăвармалла.

Вăрлăх участокĕсене суйласа илнĕ сортлă вăрлăхсемпе чи лайăх тăпраллă вырăна, 3 кун хушшинче акса хăвармалла. Çав участоксене эпир звеносем çумне çирĕплетнĕ ĕнтĕ.

3. Пĕр машина та ĕçре чарăнса тăни ан пултăр тесе, трактор бригадисене лайăх пăхса тăмалла. Эпир ĕнтĕ яланах ĕçлеме прицепщиксемпе горючи турттаракансене уйăрса çирĕплетрĕмĕр, трактористсене апатлантарас ĕçе организацилерĕмĕр, трактор бригадисем вырнаçса тăмалли хирти стансене юсарăмăр, горючи сыхласа усрамалли подвалсем турăмăр, горючие бригадăсем патне турттарса хутăмăр.

4. Чĕрĕ туртăм вăйĕпе туллин усă курмалла. Çурхи уйхир ĕçĕсем пуçланиччен 3 эрне малтан эпир лашасемпе вăкăрсене вăйлăн апатлантарма тата кантарма тăратрăмăр, çапла вара вĕсем акан хĕрÿллĕ кунĕсенче тухăçлăн ĕçлеме пултарччăр. Ĕç выльăхĕсем валли эпир 400 центнер утă тата 120 центнер концентратсем уйăрса çирĕплетрĕмĕр. Лашасемпе вăкăрсене пăхма опытлă колхозниксене уйăртăмăр, кашни лашапа вăкăр валли юрăхлă кÿлмелли хатĕрсем уйăрса çирĕплетрĕмĕр.

5. Çурхи уйхир ĕçĕсенче колхозниксен ĕçне тĕрĕс организацилемелле. Бригадăсемпе звеносен йышне çирĕплетмелле, çĕрпе, ĕç выльăхĕпе, инвентарьпе усă курас ĕçре обесличка пулмалла мар. Ĕç дисциплинине çирĕплетсе, уйрăм сдельщинăпа ушкăнлă сдельщинăна пурнăçа кĕртсе пырса, бригадăсем, звеносем тата уйрăм колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăрту сарса, ĕç тухăçлăхне вăйлăн ÿстермелле, ĕç нормисене тултарса тата ытлашшипех тултарса пымалла.

6. Выльăхсем валли апат-çимĕç çителĕклĕ уйăрса хумалла. Эпир фермăсем çумĕнчи участока 95 гектар чухлĕ акса хăваратпăр, вăл шутран пĕр çул ÿсекен курăксем 55 гектар, тымар-çимĕçсем 10 гектар, силос культурисем 15 гектар тата кукуруза 15 гектар акатпăр.

Пирĕн колхоз çуракине пур енĕпе те тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илет. Нумаях пулмасть кÿршĕри «Красный Таманец» ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсем пирĕн колхоз хире тухма мĕнле хатĕрленсе çитнине тĕплĕн тĕрĕслерĕç. Хĕрлĕ партизансен ячĕпе тăракан пирĕн колхоз, çав тĕрĕслÿ витĕр тухса, хăй çуракине питĕ лайăх хатĕрленсе çитнине кăтартса пачĕ.

Колхозниксемпе колхозница юлташсем! 1945 çулта çуракине кĕске срокесенче те пахалăхлăн туса иртттерессишĕн, 1945 çулхи вăйлă тырпулшăн социализмлă ăмăртăва хутшăнăр!

Юлташсем—МТС-сенчи трактористсемпе механиксем тата инженерсем! Çуракин малтанхи кунĕсенчех пуçласах тракторсене пĕр чарăнмасăр ĕçлеттерĕр, тракторсен паркĕпе лайăхрах усă курăр, трактор ĕçĕсен пахалăхне ÿстерĕр, хăвăрăн колхозсем умĕнчи производствăллă обязательствăрсене агротехника кăтартнă чи кĕске те лайăх срокесенче пурнăçа кĕртĕр, çуракине лайăх иртттерĕр, çавăншăн сире колхозниксем пĕтĕм чун-чĕререн тав тăвĕç!

Агроном юлташсем! Колхозниксем, хăйсен ĕçĕсене чыслăн пурнăçа кĕртес тесе, сиртен тăтăшах пулăшу тата канаш парса тăрасса, эсир пĕтĕм ĕçе лайăх ертсе пырасса кĕтеççĕ. Уйхир ĕçĕсене малта пыракан агротехникăн правилисем тăрăх туса иртттерме, уйхир бригадисемпе трактор бригадисенче ĕçе тĕрĕс организацилеме пире пулăшăр!

Колхозлă ялти социализмлă ăмăртăвăн ялавне çÿлерех çĕклер! Вăрçă вăхăтĕнчи тăваттăмĕш çуракине кăтартуллăн туса иртттерер, 1945 çулта вăйлă тырпул туса илер!

Сывă пултăр пирĕн хăватлă Совет Çĕршывĕ!

Сывă пултăр пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар—ирĕклĕх çарĕ!

Сывă пултăр аслă полководец, çулпуç, колхоз хресченĕсен учителĕпе тусĕ Сталин юлташ!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Артель председателĕ— **Ф. М. Мамонтов.**
Правлени членĕсем—**А. Е. Левенко, И. И. Ильченко, А. Н. Шивченко, Г. К. Бычек.**
Артель агрономĕ—**Ф. С. Камнев.**
Бригадирсем—**М. М. Красницкий, А. Б. Колодько.**
Звеньевойсем—**Д. А. Ланцова, А. И. Бабанина, К. А. Левенко, Т. П. Бурянова.**
Комсомол организацийĕн секретарĕ **П. М. Глуштарь.**
Трактор бригадин бригадирĕ— **П. А. Подгорный.**
Трактористсем—**М. В. Бычек, В. Г. Исайко.**
Прицепщик—**В. Ф. Королев.**
МТФ заведующийĕ—**М. В. Колодько.**
СТФ бригадирĕ—**О. Ф. Кузьмеченко.**
Колхозниксемпе колхозницăсем — **У. Е. Слипенко, М. И. Корендюк, В. М. Алейник, Р. К. Губская, М. М. Ливенко, А. В. Хребтова И. К. Савва.**

ПЛАНА ТУЛТАРНĂ РАЙОНСЕНЧЕН ПРИМЕР ИЛМЕЛЛЕ

Куславкка, Октябрьски, Сĕнтĕрвăрри тата Вăрмар районĕсен руководителĕсемпе финанс работникĕсем паян пире халăхран укçа-тенкĕ пухмалли 1-мĕш квартал планне тултарни çинчен пĕлтерчĕç. Вĕсем çакăнпа март пуçламĕшĕнче хăйсем çине илнĕ обязательствăна пурнăçларĕç. Вĕсем çакăнпа финанс планне пĕтĕмпех тата срокчен тултарма ытти районсенче те майсем пуррине, юлса пыма нимĕнле сăлтав та çуккине кăтартса пачĕç. Финанс системинчи мĕнпур работниксем тимлĕн ĕçлени тата вĕсене партипе совет организацийĕсем енчен ĕçре тăтăшах пулăшу парса тăни кирлĕ.

Вăрнар, Канаш, Çĕрпÿ, Елчĕк, Муркаш районĕсем, Шупашкарпа Канаш хулисем те 1-мĕш кварталти финанс планне тултарса çитереççĕ.

Анчах та иртнĕ пилĕккунлăхра Улатăр, Комсомольски, Кувакино, Хĕрлĕ Чутай, Пăрачкав, Советски, Сĕнтĕр, Шупашкар, Чкаловски, Шăхасан тата Етĕрне районĕсем нимĕнле улшăну та тумарĕç. Юлса пыракан районсенчи мĕнпур финанс работникĕсем, партипе совет активĕ укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарас тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлени кирлĕ. 1-мĕш кварталти финанс планне пур район, хула тата ял Совечĕ тăрăх та тултармалла.

И. ЗОЛОТНИКОВ.
Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ.

Вăрман хатĕрлемелли плана иртттерсе тултарнă

СОВЕТСКОЕ. Хурамалăх ял Советне кĕрекен «Трактор» колхоз чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли сезонри плана срокчен пурнăçларĕ. Колхоз председателĕ И. Ильдеев юлташ вăрманта ĕçлекен колхозниксем валли лайăх ловисем туса панă. Вăрман касса 330 кубометр хатĕрлемелле пулнă пулсан, колхоз 472 кубометр хатĕрлерĕ. П. Васильева, И. Максимова тата Д. Артемьева колхозницăсем хăйсен планне иртттерсе тултарчĕç.

Çавăн пекех турттарас енĕпе те 300 кубометр вырăнне 450 кубометр турттарнă. Кунта Е. Белова, А. Мокеев, А. Ильдеева юлташсем аван ĕçлерĕç.

Вăрманта лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçленĕшĕн колхозниксене 10-шар метр ситсă тата укçа-тенкĕ парса премиленĕ.

П. ЭНГЕР.

Çулйĕрсене юсас ĕç çинчен кунта маннă

ИШЛЕЙ. (Хамăр корр.). Район çулйĕр строительствине начар хатĕрленет. План тăрăх çулйĕр тума 150 кубометр чул, 1250 кубометр хăйăр кăлармалла, 557 кубометр йывăç касса турттармалла.

Хальхи вăхăта илсен, çав ĕçсене тытăннă кăна: 30 кубометр йывăç каснă, 20 кубометр турттарнă. Строительство материалĕсене турттарас ĕçе районри пур колхозсен те хутшăнмалла. Анчах та чылай колхозсем çулйĕр строительствине аса та илмеççĕ. Йывăç турттарма сахал колхозсем тытăннă.

Районра çĕнĕрен 3 кĕпер тумалла. Кирлĕ материалсене хатĕрлесе турттарман пирки вĕсене тăвас ĕç чарăнса тăма пултарать. Ишек патĕнчи пысăк кĕпер валли чул турттарма Ентимĕркасси, Мамăш, Кăшавăш ял Совечĕсене çирĕплетнĕ. Çак ял Совечĕсенчи колхозсен кунта пурĕ 150 кубометр чул турттармалла. Вăхăт иртет, вĕсем ĕçе тытăнман-ха.

Райсовет исполкомĕн çулйĕр отделĕ хăйĕн ĕçне сÿрĕк туса пырать. Хăйăр кăларса турттармалли плана колхозсем тăрăх тĕрĕс валеçмен. Кашни колхозăн туртăм вăйне уйрăмăн шута илмен, пурне те пĕр пек задани панă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ хушнă тăрăх, çурхи шывсемпе пăртан сыхланас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисем кашни районрах пулмалла. Çуркунне çывхарса килет, анчах çав комисси Ишлейре çук-ха.

Паллă стахановка Петрова юлташ Пĕтĕм Союзри канашлăва кайнă

Вăрçă вăхăтĕнче каучук промышленноçа питех те кирлĕ чĕртавар пулса тăрать. Каучук паракан ÿсен-тăрансене халĕ пирĕн республикăри колхозсенче те акса тăваççĕ.

Красноармейски районри «Красный Борденер» колхозра кок-сагыз акса тăвакан бригадăн бригадирĕ пулса çамрăк комсомолка Раиса Петрова ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕçне чĕререн парăнса, юратса тăвать. Петровăран пример илсе, унăн бригадинчи ытти юлташсем те пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ, ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пыраççĕ.

Кок-сагыз ытларах туса илессишĕн Петрова юлташ бригади иртнĕ çулта фронтри пек тăрăшса ĕçлерĕ. Петрова бригади, иртнĕ çулта кашни гектартан 22-шер центнер ытла кок-сагыз тымарĕ туса илсе, государствăна 100 центнер кок-сагыз пачĕ.

Петрова бригадирăн ĕçне хакласа тата унăн бригадинчи ытти колхозницăсен паха ĕçне шута илсе, Петрова бригадине тĕрлĕ мануфактура тата ытти промтаварсем нумай панă.

Паллă бригадир-стахановка Раиса Петрова çак кунсенче кок-сагыз акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен стахановкăсен Пĕтĕм Союзри канашлăвне Мускава кайрĕ.

А. АЛЕКСЕЕВ

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре каланă тăрăх, союзниксен çарĕсем Руртан çурçĕртерехре хăйсен Рейн çинчи укреплениине аслăлатса пынă. Союзниксем Везельтен çурçĕртерехре наступлени туса пынă. Липпе каналĕпе Динслакен хушшинчи районра чылай малалла кусăнă.

Ремаген районĕнчи укреплени патĕнче наступлени туса пыракан союзниксен çарĕсем 6 километр ытла малалла кайнă. Зиг шывĕ çинчи Эйторф хули патне çитнĕ. Унтан кăнтăр-хĕвелтухăç еннелле союзниксен çарĕсем 11 километра çити малалла кайнă. Альтенкирхенран 1,5 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри пĕр пункт патне çитнĕ.

Вăтаçĕрти секторта союзниксен çарĕсем 35 километра çити куçса, Лимбург патне çитнĕ. Паттон генералăн чаçĕсем Майн çинчи Франкфурт хули хĕррине пырса кĕнĕ. Союзниксен авиацийĕ пулăшнипе нимĕçсен икĕ контратакине сирсе янă. Вĕсенчен пĕри Ханауран кăнтăртарахра Майн шывĕ çинче пулнă, тепри—Ашаффенбург районĕнче.

Унтан кăнтăртарахра союзниксем сывлăшран е артиллерирен персе тăмасăрах Рейн шывĕ урлă тата тепĕр тĕлте каçса кайнă.

Мартăн 25-мĕшĕнче союзниксем 15.132 çынна тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, мартăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: союзниксен Анат Рейн çинчи плацдармĕн çурçĕр секторĕнче нимĕçсем вăйлăн хирĕç тăрса çапăçни лăпланса пырать. Союзниксен çарĕсем Иссель шывĕ урлă каçнă. Дингден хулине кĕрсе кайнă тата ытти 5 хулана тытса илнĕ. Союзниксем халь Рур автомагистралĕнчен пĕр километрта тăраççĕ.

Ремагентан хĕвелтухăçнерехри плацдармăн çурçĕр секторĕнче, Зиг шывĕ тăрăх, тăшман союзниксене хирĕç вăйлăн кĕрешет. Ытти вырăнсенче союзниксен чаçĕсем Германи ăшнелле хăвăрт кĕрсе пынă. Хĕвелтухăçнелле 43 километра çити куçса кайнă танковăй чаçсем Хербори хули патне çитнĕ. Унтан кăнтăртарахра танковăй чаçсем 22,5 километра çити малалла кайнă. Лимбург хулинчен 16 километр çурçĕр хĕвелтухăçнерехри Вейльбург хули хĕррине пырса тухнă. Ауменау районĕнче Лимбургран 16 километр хĕвелтухăçнерехре, Лан шывĕ урлă каçса кайнă. Танковăй чаçсем хыççăн пыракан пехота Лимбург хулине тасатнă. Кăнтăр-хĕвелтухăçнелле каякан автомагистраль тăрăх куçса пыракан танковăй чаçсем Висбаденран 8 километрта ларакан пункт патне çитнĕ.

Союзниксен Майн шывĕ урлă каçнă танковăй чаçĕсем Майн çинчи Франкфурт хулинче çапăçаççĕ. Хула хĕрринчи виçĕ ялтан тăшмана хăваласа кăларнă.

Вормс çывăхĕнчи плацдарм районĕнче союзниксен чаçĕсем, хĕвелтухăçнелле 15,5 километра çити куçса, халăх пурăнакан темиçе пункта тасатнă. Çав районта çурçĕртен кăнтăралла каякан автомагистраль урлă каçса кайнă.

Мартăн 26-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем хĕвеланăç фронтĕнче 19.712 çынна тыткăна илнĕ.

ФРАНЦИ ÇАРĔСЕН ĔÇĔСЕМ

ПАРИЖ, мартăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио паян Францин генеральнăй штабĕн официальнăй пĕлтерĕвне панă. Пĕлтерÿре каланă тăрăх, Франци çарĕсем Карлсруэ хулине хирĕç выртакан хăйсен пĕтĕм участокĕнче Рейн хĕррисене йышăннă. Францин шурлăхлă тата минăсем лартса тухнă вырăнпа куçса пыракан пĕрремĕш армийĕ Рейн шывĕн хĕвеланăç хĕрринче нимĕçсен Максимилиансау хули патĕнчи юлашки плацдармне пĕтерсе тăкнă.

Трофейсем нумай тытса илнĕ, вĕсем хушшинче—300 тупă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНА ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен «Москито» йышши самолечĕсем Берлина тапăннă.

ГЕРМАНИ ОБОРОНИН ЛИНИНЕ ТАТСА КĔНИ ÇИНЧЕН ЭЙЗЕНХАУЭР КАЛАСА ПАНИ

ЛОНДОН, мартăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Парижран пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй главнокомандующийĕ Эйзенхауэр паян Германи оборонин тĕп линине татни çинчен каланă. Нимĕçсем, тенĕ вăл, ку таранччен тытăнса тăнă пек малалла тытăнса тăма пултараймĕç. Анчах та, тенĕ Эйзенхауэр, союзниксем пĕр чăрмавсăрах Берлина пырса çитĕç, тесе шутламалла мар.

«Калаçса»,—тенĕ Эйзенхауэр, — нимĕнле мир те тума çук. Германие икĕ енчен хĕссе пыракан союзниксен армийĕсем, çĕмĕрсе пырса, Германие пĕр сăмахсăр парăнтарни çеç пулма пултарать.

Шурă Çурт пĕлтерни

ЛОНДОН, мартăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви «Дейли мейл» хаçатăн корреспонденчĕ Нью-Йоркран пĕлтернине парать. Пĕлтерÿре çапла каланă: паян Рузвельт президент хăйĕн кабинечĕн членĕсене тата мĕнпур дипломатиллĕ представителĕсене Европăра халех çĕнтерес пулсан хатĕр пулма распоряжени панă. Шурă Çурт пĕлтернĕ тăрăх, пур дипломатиллĕ представительсене те президент Европăра хăйсен вырăнĕнчех юлма хушнă, пĕр-пĕр пит паллă событи пулас пулсан е Германи хăвăрт арканса каяс пулсан, вĕсем кирлĕ ĕçсем тума хатĕр пулмалла. Правительствăн членĕсене те Рузвельт çавăн пекех Вашингтонра хатĕр тăма, хăйсен вырăнĕсенчех юлма хушнă, апрелĕн 25-мĕшĕнче Сан-Франциско хулинче пулмалли Пĕрлешÿллĕ нацисен конференцине каяссинчен шутлама хушман. Çакăнпа пĕрлех президент çапла каланă: Сан-Франциско хулинчи конференцире Америка делегацийĕ хăйĕн советникĕсен йышне мĕн май килнĕ таран ытларах чакармалла, тенĕ. Çакăн çинчен Шурă Çуртăн секретарĕ Джонатан Даниэльс пĕлтернĕ. Вăл çапла каланă: президент тăвакан çак ĕçĕн икĕ тĕллевĕ пур—официальнăй тĕп çынсене çак татăклă кунсенче хăйсен вырăнĕнчех тытса хăварасси тата Сан-Франциско хулинчи отельсемпе транспорт çинче çын нумай капланассинчен сыхланасси. Президент Сан-Франциско хулине хăçан каять тата унта кайма вăл шутлать-и? тесе ыйтнине хирĕç Даниэльс çапла каланă: кун çинчен эпĕ нимĕн те пĕлместĕп, тенĕ. Маларах Рузвельт конференцие кайса унта делегатсем умĕнче сăмах тухса каласшăн пулни çинчен Рузвельт малтанах пĕлтернĕччĕ.

Польшăн Вăхăтлăх Правительстви Совет Союзне, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене, Великобритание тата Китая янă çыру

ВАРШАВА, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Паян кунта Польша республикин Вăхăтлăх Правительстви Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен, Великобританин тата Китайăн правительствисене мартăн 22-мĕшĕнче янă çырăва пичетлесе кăларнă. Çырура çапла каланă:

«Крымри конференци Сан-Франциско хулинче апрелĕн 25-мĕшĕнче Пĕрлешÿллĕ нацисен конференцине пухма йышăннине Польша халăхĕ савăнса саламлать. Вăл конференцие мире сыхласа тăрас тата хăрушсăрлăхăн пĕтĕм тĕнчери организацийĕн уставне хатĕрлес тĕлĕшпе тĕнчери государствăсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлеме пултарччăр тесе пухаççĕ.

Гитлерăн вăрă-хурахла агрессийĕ Польшăна малтанах пăвса ÿкерчĕ; фашистла нимĕç оккупацийĕнче 5 çул ытла пурăнса Польша калама çук пысăк асап курчĕ. Ăна çав тери пысăк сиен кÿчĕç, ишĕлтерчĕç: нимĕç захватчикĕсем хĕвелтухăçнелле тапăнма хатĕрленнине Польша темиçе ĕмĕр хушши тÿссе тăчĕ. Çавăнла мир тытса тăма пултаракан пĕтĕм тĕнчери организацие туни Польшăшăн питĕ кирлĕ пулса тăрать, çавăнпа вăл Сан-Францискăри конференцие активлăн хутшăнмалла. Çакна пуринчен ытла хальхи вăхăтра, çак хăрушă вăрçăран Польша вăйланса тата çĕнелсе тухтăр тесе тата Вăтаçĕрти Европăра, çавăн пекех тата Балтика тинĕсĕн бассейнĕнче хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнтăр тесе тăрăшмашкăн Польша халăхĕ çителĕклĕ вăй тупнă вăхăтра, уйрăмах хытă палăртмалла.

Çавăнпа та Польша общественноçĕ çакăн пирки питĕ тĕлĕнчĕ: Сан-Францискăри конференцие чĕннĕ союзлă государствăсем хушшинче ирĕке тухнă Польша, нимĕçсене хирĕç кĕрешекен Польша, хăйĕн государствине çĕнĕрен йĕркене кĕртекен Польша çук иккен. Сан-Францискăри конференцие Польшăна чĕнмесĕр иртттерни Польша халăхне нимĕнсĕрех кÿрентерни пулнă пулĕччĕ, мĕншĕн тесен Польша халăхĕ хăйĕн никама пăхăнманлăхне пурнăçа кĕртме тăрăшать, вăл Европăра мирпе цивилизацие фашистла тискерлĕхрен тата нимĕçсен захватчикла туртăмĕсенчен хÿтĕлессине хăйĕн чыслă ĕçĕ тесе шутлать.

Польшăн халь ĕçлесе тăракан Вăхăтлăх Правительствине Сан-Францискăри конференцие чĕнмесĕр хăварма нимĕнле сăлтав та çук. Крымри конференцире Польша тĕлĕшпе консультаци пама уйăрса хунă комисси хăйĕн ĕçне туса пĕтерейменни Польшăн Вăхăтлăх Правительствине Сан-Францискăна чĕнме кансĕрлеме пултараймасть.

Польшăн Вăхăтлăх Правительстви хăй тавра Польша халăхĕн питĕ пысăк пайне пĕтĕçтерчĕ. Польшăн Вăхăтлăх Правительстви Польша çарне мобилизацилерĕ, çав çар халь хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр нимĕç йыткĕтĕвĕсене аркатас ĕçе туса пырать, юлашки кунсенче вăл Хĕрлĕ Çарпа пĕрле нимĕçсен тинĕс хĕрринчи вăйлă çирĕплетнĕ валне, Германин чи кирлĕ центрĕсем патне пымалли çула хÿтĕлесе тăраканскере, татрĕ.

Польшăн Вăхăтлăх Правительстви нимĕçсем тискеррĕн аркатнă хăйĕн столицине — Варшава хулине тата Польшăн ытти хулисене юсать, ялхуçалăхне, промышленноçа, суту-илĕве çĕнĕрен ура çине тăратать, Польша территорийĕнче йĕрке тăвать тата законсене пурнăçа кĕртсе пырать.

Эмиграцири реакционерсен шайкки кăна, Пĕрлешÿллĕ нацисене пĕр-пĕринпе хирĕçтерме тăрăшакан, çапла вара гитлерла Германин хапсăмĕсем майлă ĕçлекен шайкка кăна пĕтĕм халăхăн çав юхăмне хирĕç пырать, демократиллĕ Польшăн государствине çĕнĕрен йĕркелесе ярса çирĕплетес тĕлĕшпе Вăхăтлăх Правительство тăвакан тем пысăкĕш ĕçсене хирĕç пырать. Эмиграцири реакционерсен шайкки, Крымри конференцин демократиллĕ Польшăна ура çине тăратмалли решенийĕсене хирĕç пырса халĕ ĕнтĕ хăйне хăй татăклăнах хăйĕн халăхне хирĕç те, демократиллĕ союзлă державăсене хирĕç те тăратрĕ.

Ирĕклĕ, никама пăхăнман, демократиллĕ Польшăна тăвас ĕçе, Совет Союзĕпе туслăн пурăнма тăрăшакан Польшăна, Пĕрлешÿллĕ нацисен шанчăклă членĕ пулма тăрăшакан Польшăна, Европăри мирпе хăрушсăрлăхăн тĕрекĕ пулмалли Польшăна тăвас ĕçе хутшăнма тăрăшакан мĕнпур демократиллĕ çынсене анлăн та пултаруллă ĕçлемешкĕн Польшăн Вăхăтлăх Правительстви кирлĕ условисем туса пачĕ.

Пысăк асапсем тÿссе иртттернĕ хыççăн Польша халăхĕ хăйĕн представителĕсем—Польшăн Вăхăтлăх Правительстви—Сан-Францискăри конференцие хутшăнĕ, демократиллĕ Польша пĕрлешÿллĕ нацисен çемьинче тивĕçлĕ вырăн йышăнĕ тесе шанса тăрать.

Польша Халăх Совечĕн Президенчĕ Б. БЕРУТ.
Польшăн Вăхăтлăх Правительствин Премьер-Министрĕ Эд. ОСУБКА-МОРАВСКИЙ».

ЮГОСЛАВИ ПРАВИТЕЛЬСТВИПЕ ЮНРРА ТУНĂ ДОГОВОР

БЕЛГРАД, мартăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Енер Югослави правительствипе ЮНРРА (нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсене пулăшма тунă администраци) Югославие апат-çимĕçпе материалсем парса пулăшмалли çинчен договор тунă. Договор тунă çĕрте Тито маршал пулнă.

Пичетлесе кăларнă официальнăй пĕлтерÿре каланă тăрăх, Югославие апат-çимĕç, медикаментсем, кĕпе-тумтир, атă-пушмак çавăн пекех ялхуçалăхне, промышленноçпа транспорта ура çине тăратма кирлĕ материалсем памалла. ЮНРРА паракан япаласене Югослави правительстви валеçмелле, мĕнле валеçнине ЮНРРА представителĕ сăнаса тăмалла. Кăçалхи апрелĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа договор пурнăçа кĕрет.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕнчен, Халăх Комиссарĕсен Совечĕнчен тата ВКП(б) Чăваш Обкомĕнчен

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата ВКП(б) Чăваш Обкомĕ РСФСР-ĕн тава тивĕçлĕ учительници-орденоносец Анастасия Моисеевна ТИМОФЕЕВА йывăр чирлесе выртнă хыççăн кăçалхи мартăн 29-мĕшĕнче вилсе кайни çинчен хурланса пĕлтереççĕ.

А. М. Тимофеева юлташа пытарма комисси тунă

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, РСФСР-ĕн тава тивĕçлĕ учительницине-орденоносеца Анастасия Моисеевна Тимофеевăна пытарма комисси тунă. Комисси составĕнче çак юлташсем тăраççĕ: М. П. Макаров (председателĕ), А. М. Шалфеева, П. В. Крылов юлташсем.

Тимофеева юлташа пытарас ĕçпе çыхăннă расходсене Наркомпрос бюджечĕ çине йышăнмалла тунă.

А. М. Тимофеевăна пытарас тĕлĕшпе ĕçленекен комиссирен

А. М. Тимофеевăн тупăкне учительсен çуртĕнче (Ленин урамĕ) вырнаçтараççĕ.

А. М. Тимофеевăпа сывпуллашма мартăн 30-мĕшĕнче 12 сехетрен пуçласа каçхине 6 сехетчен кĕме пулать.

А. М. Тимофеевăна мартăн 31-мĕшĕнче 12 сехетре кăнтăрла пытараççĕ.

А. М. Тимофеева

Кăçалхи мартăн 29-мĕшĕнче, нумай вăхăт йывăр чирлесе выртнă хыççăн, РСФСР тава тивĕçлĕ учительници Анастасия Моисеевна Тимофеевна вилсе кайрĕ. Большевиксен партийĕн членĕ, халăха çутта кăларас ĕçре активлăн ĕçленĕ ватă педагог пирĕн хушăран уйăрăлса кайрĕ.

Анастасия Моисеевна 1881 çулта учитель çемьинче çуралнă. 1897 çулта педагог пулса ĕçлеме тытăнса, вăл хăйĕн пурнăçĕн вĕçне çитиччен çак ырă та паха ĕçе парăнса ĕçленĕ. Вăл 1935 çултан пуçласа юлашки кунччен совет ĕçне активлăн хутшăннă, ĕçсынни депутачĕсен Тăвай район совечĕн депутачĕ пулнă.

Анастасия Моисеевнăна пĕлнĕ çынсем пурте çак ывăнма пĕлмесĕр, яланах пуçарса кăтартса ĕçленĕ питех те лайăх çынна нихăçан та манмĕç. Учитель пулса тăрса, вăл çак паха профессие хĕрÿллĕн юратса пăрахнă та хăйĕн пурнăçĕ вĕçленичченех вăл ĕçе хăйĕн пĕтĕм вăйне парса ĕçленĕ.

Партипе правительство унăн ĕçне пысăка хурса хакланă—ăна Ленин орденĕпе наградăланă.

А. М. Тимофеевăн пурнăçĕпе ĕçĕ халăха çутта кăларас ĕçри работниксемшĕн яланах пример пулса тăрĕ.

Макаров, Евлампьев, Шалфеева, Ефремов, Трофимов, Николаева.

Шупашкар хулине çуркуннехи вăхăтра тасатса тăрасси çинчен

Ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕ хулана çуркуннехи вăхăтра тасатса тăрасси пирки çак çулхи мартăн 22-мĕшĕнче распоряжени кăларнă. Çав распоряжени тăрăх, промышленность, суту-илÿ, коопераци учрежденийĕсен, общественнăй организацисен руководителĕсене, общежитисен комендантчĕсене, çурт-йĕр управляющийĕсене тата харпăрхăй çурчĕсен хуçисене хулана тасатас ĕçе халех тытăнма хушнă. Урамсене, тротуарсене, ялхушшисене тата ытти вырăнсене юртан, çÿп-çапсенчен, тасамарлăхсенчен пĕтĕмпех тасатмалла. Çак ĕçсене харпăрхăй вăйĕпе туса иртттермелле.

Площадьсене, бульварсене, садсене тата ытти вырăнсене тасатас ĕçе—хулари коммунальнăй хуçалăх отделне, базарсене тасатас ĕçе—Сосновкăпа Чапаев поселокĕсен Совечĕсене хушнă.

Хулана 1945 çулхи апрелĕн 20-мĕшĕ тĕлне тасатса çитермелле. Мартăн 25-мĕшĕпе апрелĕн 10-мĕшĕ хушшинче çурт хуралтисем çинчи юра антармалла, çуртсем йĕри-тавра çурхи шывсем юхса каймалли канавсем чавмалла.

Тислĕкпе ытти тасамарлăхсене хула территорине, уйрăмах Чебоксаркăпа Кайбулка шывĕсене тăкма юрамасть. Пăр тапраниччен Атăл çине, çыранран 40—50 метр шаларах кĕрсе, тăкма юрать. Унсăр пуçне, тислĕкпе ытти тасамарлăхсене Етĕрнепе Хусан çулĕсемпе тухса, хуларан 2 километр инçетерех колхоз хирĕсене, пахчасене тата ятарласа уйăрнă вырăнсене тăкмалла.

Çак кăтартусене пăснăшăн айăплă çынсене пĕр уйăх хушши ирĕксĕр ĕçлеттермелле тума е 100 тенкĕ таран штраф пама пултараççĕ. Çак распоряжени пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине тĕрĕслесе тăма хулари милицие, госсанинспекцие, коммунальнăй хуçалăх отделне тата урам комитечĕсене хушнă.

КУÇСА ÇÜРЕКЕН ХЕРЛĔ ЯЛАВА 12-МĔШ ХУТ ИЛНĔ АРТЕЛЬ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Караньялĕнчи «Труд» артель промысла коопераци артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕнче пĕрмаях малта пырать. Иртнĕ уйăхри социализмлă ăмăртура мала тухнăшăн ăна Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата 10 пин тенкĕ преми памалла тунă. Çак кунсенче артеле çав ялава пачĕç. Кунпа вăл 12-мĕш хут ялав илчĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—37, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00554 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000